Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

43 (8809) № ✻ Ытларикун, 2020 çулхи çĕртме (июнь) уйăхĕн 9-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Çивĕч ыйту

Вирус сарăлсах пырать

Ĕнерхи куна Муркаш районĕнче коронавируспа чирлекенсен шучĕ 131 çынна çитнĕ. Республикăра вара унченхи кунри хисеп 86-па пысăкланнă – пурĕ 3361 çын.

Иртнĕ эрне вĕçĕнче республикăри оперативлă штаб коронавирус тĕлĕшпе лару-тăрăва сӳтсе явма черетлĕ хут пухăннă. Унта палăртнă тăрăх, Чăваш Ен чикĕлевсенчен тухса пымалли тапхăр патне çитеймест-ха. Çакна валли ирĕклĕ койка фончĕ çителĕксĕр: чикĕлевсенчен тухса пыма çак фонд пурринчен 50 процентран сахал мар пулмалла пулсан, республикăра – 29 процент чухлĕ кăна.

Июнĕн 4-мĕшĕ тĕлне республикăри мониторинг çакна кăтартса панă: чирленисен 40 проценчĕ – ĕçлемен çынсем, ытларахăшĕ пенсионер, 21 процент ытларах – патшалăх тата муниципалитет служащийĕсем, 18 процента майлă – медицина ĕçченĕсем, 7 процент – ĕçлекенсем, 7 процент – ачасем. Кун пирки Роспотребнадзорăн Чăваш Енри управленийĕн ертӳçи Н. Луговская пĕлтернĕ.

Коронавируса малалла сарăлма парас мар тесен санитари йĕркине, социаллă дистанцие пăхăнмаллине аса илтеретпĕр.

Н. НИКОЛАЕВА.

Сырăнтару – 2020

Июнĕн 1 – 10-мĕшĕсенче йӳнетнĕ хакпа çырăнтараççĕ

«Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата июльтен илсе тăма июнĕн 1 – 10-мĕшĕсенче йӳнетнĕ хакпа çырăнтараççĕ.

Ултă уйăха çырăнмалли йӳнетнĕ хак – 438 тенкĕ те 60 пус. Декада хыççăн 480 тенкĕ те 6 пуспа çырăнмалла пулать.

Çăмăллăхпа усă курăр. Ку çырăнтару тапхăрĕнче урăх çăмăллăх памаççĕ.

Редакци.

Кашни çынпах тимлĕ

Сăн ӳкерчĕкре эсир Светлана Скворцовăна куратăр. Вăл – Чăваш Республикин Ĕç тата социаллă хӳтлĕх министерствин «Социаллă пулăшу мелĕсемпе тивĕçтерекен центр» хысна учрежденийĕн районти социаллă хӳтлĕх пайĕн тĕп эксперт специалисчĕ. 1987 çултанпа çак ĕçре. Çынпа тимлĕ, сăпайлă пулни, кашни çынна ăнланма пĕлни кун пек ĕçре вăй хураканăн уйрăмах кирлĕ. Светлана Леонидовна вара Раççей шайĕнчи ĕç ветеранĕсемпе тата пысăк ĕç стажĕпе «Чăваш Республикин ĕç ветеранĕ» ята тивĕçнисемпе ĕçлет, вĕсен ыйтăвĕсене татса парассишĕн тимлет. Кун пеккисем районĕпе 5 пин çынна яхăн. Районти ветерансем хăйсене тивĕçлĕ пулăшу мелĕсене, тӳлевсене вăхăтра тата туллин илсе тăрасси, хăйсен кулленхи ыйтăвĕсене татса пама пултарасси унăн тăрăшулăхĕпе тӳрремĕнех çыхăннă.

В. ШАПОШНИКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.

Наци проекчĕ

Ял ачисен те майсем ытларах пулаççĕ

«Образование» наци проекчĕн шайĕнче «Современная школа» федераци проекчĕ пурнăçланать. Унăн тĕллевĕ – пĕтĕмĕшле вĕренӳ программисен содержанийĕпе технологине çĕнетсе улăштарасси.

«Современная школа» проект – наци проекчĕсем çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесне, вăл шутра ялсене те, çитнине кăтартса паракан проектсенчен пĕри. Çак проект пурнăçа кĕни ялсенчи тата пĕчĕк хуласенчи шкул ачисене те хальхи вăхăтри технологисемпе усă курса пĕлӳ илме пулăшмалла. Çавăнпа та проекта пурнăçланă май ялсенчи тата пĕчĕк хуласенчи шкулсенче «Точки роста» центрсем уçма палăртнă.

Шăпах çак проектпа пăхса хунă пысăк ĕçе пурнăçласа пирĕн районти шкулсенче те цифра тата гуманитари профилĕсен «Точки роста» центрĕсем пĕлтĕр ĕçлеме тытăнчĕç. Иртнĕ çул кун пек икĕ центр уçăлчĕ – Мăн Сĕнтĕрти тата Йӳçкассинчи вăтам шкулсенче. «Точки роста» центр вĕренӳ организацийĕн структура тытăмĕ пулса тăрать.

Кун пек центрсенче технологи, математика тата информатика, физкультура тата ОБЖ предмечĕсемпе, хушма пĕлӳ илессипе ятарлă вĕренӳ программисене пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Çак программăсене алла илекенсен шучĕ чылай пулмалла. Асăннă предметсемпе тарăн пĕлӳ илме пур шкул ачине те явăçтараççĕ пулсан, цифра, çут çанталăк ăслăлăхĕн, техника тата гуманитари профилĕсемпе уроксем хыççăнхи хушма пĕлӳ илессине – шкул ачисен 70 процентĕнчен кая мар.

Çак центрсене çĕнĕ оборудованипе тивĕçтереççĕ. Унта ачасемпе ĕçлекен педагогсем те ятарлă курссенче вĕренсе кирлĕ пĕлӳ пухаççĕ. Йӳçкассинчи вăтам шкулта «Точки роста» центр уçма, сăмахран, 1 миллион та 600 пин тенкĕлĕх çĕнĕ оборудовани туяннă. Пĕтĕмпех – ачасене тарăн пĕлӳ илме. Кун пек центрсенче ачасене тĕрлĕ станокпа ĕçлеме хăнăхтарассине те, роботсем ăсталассине те, шашка-шахматла выляссине те пăхса хунă. Кунта пултарулăха тĕрлĕ енлĕ аталантарма май пур, вăл шутра – проект ĕçне-хĕлне вĕренсе пынипе те.

Çапла ялти шкул ачисене кун пек центрсем тарăнрах та анлăрах пĕлӳ илме кăна мар, пулас профессие маларах суйласа илме те пулăшмалла.

Сăмах май, Чăваш Республикинче 2024 çул вĕçленнĕ тĕле кун пек центрсем 180 яхăн пулмалла.

Муркаш район администрацийĕн вĕренӳ пайĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, «Точки роста» центрсем кăçал тата тепĕр икĕ шкулта уçăлмалла – Калайкассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулта тата Çатракассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулта. Çак шкулсенче халĕ юсав ĕçĕсене тытăннă. Класс пӳлĕмĕсене юсаса çĕнетнĕ хыççăн вĕсене хальхи вăхăтри çĕнĕ оборудованипе тивĕçтерес тапхăр пуçланĕ.

Н. НИКОЛАЕВА.

Республикăра

Ĕне усракансене – пулăшу

Çĕртме уйăхĕн 8-мĕшĕнче Чăваш Республикин Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Олег Николаев эрнесеренхи канашлу ирттернĕ. Унта иртнĕ канмалли кунсенчи лару-тăрăва пăхса тухнипе пĕрлех, килти хушма хуçалăхсенче ĕне тытнăшăн пулакан тăкаксен пĕр пайне саплаштарассин ыйтăвне те пăхса тухнă. Ку çĕнĕ пулăшу пирки Олег Николаев иртнĕ эрнерех пĕлтернĕччĕ. Çак тĕллевпе муниципалитетсем валли пурăнмалли нумай хваттерлĕ çуртсен картишĕсене тирпей-хăт кĕртме уйăрма пăхнă, анчах контракт туман укçа-тенкĕне уйăраççĕ.

ЧР ял хуçалăх министрĕ Сергей Артамонов пухăннисене асăннă пулăшу валли хатĕрленĕ правилăсен проектне хатĕрлени пирки пĕлтернĕ. Укçа-тенкĕ пулăшăвĕ кашни мăйракаллă шултра выльăх тĕлĕшпе пулĕ: пĕр ĕнешĕн – 2300 тенкĕ, икĕ ĕнешĕн – кашнин пуçне 3300 тенкĕ, 3 е ытларах ĕнесемшĕн – 4300 тенкĕ.

Патшалăхăн асăннă пулăшăвĕпе республикăра пурĕ 22 пин килти хушма хуçалăх усă курма пултарĕ. Вĕсем паянхи куна 56 пин пуç ытла ĕне тытаççĕ. Асăннă пулăшупа тивĕçтерме республика бюджетĕнчен 185 миллион тенкĕ укçа уйăрĕç. Тӳлевсене халăх патне çĕртме уйăхĕн вĕçĕнче çитерме палăртаççĕ. Çак пулăшупа усă куракансен вырăнти ял тăрăхĕсен администрацине заявлени çырмалла пулать.

ЧР Пуçлăхĕн Администрацийĕн пресс-служби.

Ачасене йышăнма хатĕрленеççĕ

Ача-пăча сывлăхне çирĕплетмелли лагерьсем, малтанласа палăртнă тăрăх, июлĕн 1-мĕшĕнчен ĕçлеме тытăнмалла. Çапах та Чăваш Республикин Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Олег Николаев пĕтĕмпех коронавирус тĕлĕшĕнчи лару-тăруран килнине палăртнă. Апла пулин те лагерьсен ачасене йышăнма хатĕрленсе çитмелле.

Лагерьсен ĕçне Роспотребнадзор сĕнĕвĕсене шута илсе йĕркелĕç: лагерьсене вырнаçма пултаракан ача шутĕнчен çуррине кăна йышăнмалла, массăллă мероприятисене йĕркелессипе чикĕлевсене пăхăнмалла, смена вăхăтĕнче лагерьти персоналăн лагерьтен тухса каймалла мар тата ытти те.

Иртнĕ эрнере Олег Николаев лагерьсен хатĕрленĕвне тĕрĕсленĕ, ĕçе лайăх шайра йĕркеленине курнă.

Роспотребнадзор сĕнĕвĕсене шута илсе, хатĕрленӳ мероприятийĕсене пурнăçлама вара лагерьсем валли тата 19 миллион тенке яхăн кирлине палăртнă.

Çак ĕçе тивĕçлĕ шайра пурнăçласан маларах асăннă кун тĕлне республикăри 15 лагерь хăйĕн алăкĕсене уçĕ.

Хамăр инф.

Саламлатпăр

Пирĕн ылтăн-кĕмĕлтен те хаклăрах çыннăмăра – Муркашра пурăнакан **Галина Андреевна СПАСКИНĂНА** сумлă юбилей ячĕпе чун-чĕререн чи ăшă кăмăлпа саламлатпăр. Вăрманти чи мăнаçлă юман евĕр çирĕп сывлăх, ирхи сывлăм пек таса кунçул, инçе çул евĕр вăрăм ĕмĕр сунатпăр. Мĕн шутланисем пурнăçланса пычăр. Умри çулу санăн яланах анлă та çутă, такăр пултăр. Пире савăнтарса пурăнма Турри сана тата нумай çул усратăр.

Ăшă кăмăлпа ырă сунса: мăшăрĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, ывăлĕпе кинĕ, 4 мăнукĕ.

Райадминистрацире

Тава тивĕçлĕ ĕçшĕн

Нумай çул тăрăшса вăй хунăшăн район администрацийĕн 2020 çулхи майăн 12-мĕшĕнчи 512-мĕш номерлĕ йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

– Галина Ивановна ИЛЬИНАНА, Çатракасси вăтам шкулĕн структура подразделенийĕн – шкул çулне çитменнисен Очăкассинчи вĕренӳ учрежденийĕн воспитателе пулăшаканне;

– Владислав Сергеевич КУЗОВА, Оринин вăтам шкулĕн шкул автобусĕн водительне.

Çитĕнекен ăрăва вĕрентсе воспитани парассипе тунă çитĕнӳсемшĕн тата нумай çул тăрăшса вăй хунăшăн район администрацийĕн 2020 çулхи майăн 25-мĕшĕнчи 559-мĕш номерлĕ йышăнăвĕпе район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

– Елена Петровна ЛЮБИМОВĂНА, 3-мĕш номерлĕ «Солнышко» ача сачĕн музыка ертӳçине.

Патшалăх пулăшăвĕ

Социаллă контракт çырни пулăшать

Сахал тупăшлă çемьесене тата пĕччен пурăнакан çынсене социаллă контракт тăрăх патшалăх пулăшăвĕпе тивĕçтерес ĕç малалла пырать

Социаллă контракт тунин тĕллевĕ – уйрăм граждансен тата çемьесен укçа-тенкĕ тупăшне ӳстерме пулăшасси.

2020 çул пуçланнăранпа Муркаш районĕнче 43 социаллă контракт тунă. Çак контракта çырнисем килĕшӳре палăртнă укçа-тенке тĕрлĕ енлĕ ĕç пурнăçлама илсе тăраççĕ. Çапла 4 çын – ĕç шыраса ĕçе вырнаçма, 1 çын – уйрăм предприниматель ĕç-хĕлне пурнăçлама, 1 çын – вĕренме е хушма пĕлӳ илме, пурнăçри ытти йывăр лару-тăруран тухма – 37 çын.

Социаллă контрактсем тăрăх çак 43 çынна çулталăк пуçланнăранпа патшалăх пулăшăвĕпе пурĕ 1 миллион та 500 пин тенкĕлĕх тивĕçтернĕ.

Çемьери тупăш пĕчĕкленнĕ пулсан, маларах асăннă енсемпе социаллă контракт çырма кăмăл пулсан, районти социаллă хӳтлĕх пайне пĕлтерме пултаратăр. Социаллă контракт илсе патшалăх пулăшăвне тивĕçме май пур.

Муркаш районĕнчи социаллă хӳтлĕх пайĕ.

Июлĕн 1-мĕшĕ – сасăлав кунĕ

Хамăрăн шухăша уççăн палăртăпăр

Раççей Тĕп саккунне – Конституцие кĕртме сĕнекен улшăнусемшĕн сасăлав июлĕн 1-мĕшĕнче иртет. РФ Президенчĕ Владимир Путин хăйĕн указĕпе çак куна официаллă çирĕплетрĕ. Июлĕн 1-мĕшĕнчи юнкун канмалли кун пулать. Кунпа пĕрлех президент çынсен сывлăхĕ, пурнăçĕ епле пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртрĕ, çавна май пĕрлехи мероприятие пур санитари, асăрхаттару мелĕсене тĕпе хурса ирттерме чĕнсе каларĕ.

Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕпе – Муркаш территори суйлав комиссийĕн председателĕпе Лилия ТАРАСОВĂПА тĕл пулнă май, июлĕн 1-мĕшĕнче сасăлав мĕнле йĕркепе иртесси пирки тĕплĕнрех ăнлантарса пама ыйтрăм:

– Пĕтĕмĕшле илес пулсан, Конституцие кĕртме сĕнекен улшăнусем тĕлĕшпе сасăлав унченхи суйлавсен йĕркипех иртмелле. Çапах та хăш-пĕр уйрăмлăхсене те шута илме тивет. Çакна чи малтанах кăçал сасăлава мĕнле лару-тăрура ирттерме тивнипе çыхăнтарнă пулăттăм. Хальхи вăхăтра коронавирус инфекцийĕ сарăлассин хăрушлăхĕ иртсе пĕтмен. Çавăнпа та чи малтанах асăрхану, сыхлану, санитарипе гигиена нормисене пăхăнасси пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать.

Районĕпе сасăлав ирттерме 51 участок йĕркеленĕ. Участоксен комисси членĕсене пурне те комплектланă. Сасăлав участокĕсем хăй вăхăтĕнче сасăлава хутшăнаканскене йышăнма пурте хатĕр пулаççĕ.

Сасăлав июлĕн 1-мĕшĕнче 8 сехетре пуçланать. Çавăн чухне участоксем хăйсен алăкĕсене уçаççĕ, сасăлакансене йышăнма тытăнаççĕ. Сасăлав каçхи 8 сехетчен пырать.

Ку вăл сасăлав кунĕнче – июлĕн 1-мĕшĕнче çапла пулать. Апла пулин те сасăлав участокĕсем пĕр эрне маларахах – июнĕн 25-мĕшĕнчех ĕçе кӳлĕнеççĕ, çынсене йышăнма тытăнаççĕ. Çапла вара çынсене пĕр эрне маларах сасăлама май туса панă. Çакă та вăл пĕрлехи сасăлав кунĕнче çынсем участокра ытлашши нумай пухăнса ан кайччăр тесе тунă мера пулса тăрать.

Çынсем патне килĕсене пырса сасăлаттарассин майĕ сыхланса юлать. Ватăсене, инвалидсене сасăлава пырса çӳреме йывăртарах. Çавăнпа та кун пеккисем патне сасăлав ирттерекенсем хăйсем çитме пултараççĕ. Кун пирки комиссие шăнкăравласа та, ытти çынсем урлă та пĕлтерме пулать.

Тепĕр çĕнĕлĕх – сасăлав кунĕччен маларах вырăна тухса сасăлав ирттересси. Ку мелпе июнĕн 25-мĕшĕнчен тытăнса июнĕн 30-мĕшĕччен усă курма май пур. Калăпăр, енчен те пĕр-пĕр ялта сасăламалли пӳлĕм çук тата çынсене сасăлама пырса çӳреме транспортпа тивĕçтерме те йывăр пулсан, кун пек çынсен ушкăнĕ валли уйрăм сасăлав йĕркелеме пултараççĕ. Çапла вара вĕсене хăйсем пурăнакан вырăнтах сасăлама май туса параççĕ.

Палăртрăм ĕнтĕ, сыхлăх пирки манма юрамасть. Сасăлав кунĕнче унăн нормисене çирĕп пăхăнмалла пулать. Сасăлама кабинăсене пĕршерĕн кĕртеççĕ. Участока пыракансенне ӳт-пӳ температурине виçеççĕ. Кашни çынна хăйне уйрăм маска, перчетке, авторучка параççĕ. Пĕр сасăлаканпа тепĕр сасăлакан хушши 1,5 метртан кая пулмалла мар. Дистанцие пурин те пăхăнма тивет. Паспорт пурин те çумра пулмалла. Унти даннăйсене сасăлава хутшăнаканăн хăйĕн уçса кăтартмалла пулать.

Сасăлав участокĕсене пурне те дезинфекци хатĕрĕсемпе тивĕçтеретпĕр. Участоксен пӳлĕмĕсене, сĕтел-пукана, кабинăсене вăхăтран вăхăта дезинфекци туса тăрĕç. Алăсене çуса дезинфекци тума уйрăм пӳлĕм уйăраççĕ.

Сасăлава хутшăнакана пĕр бюллетень параççĕ. Кашнийĕнех Раççей Конституцине кĕртме сĕнекен улшăнусемшĕн е вĕсене хирĕç сасăлама май пулать.

Хальхи вăхăтра пирĕн районта сасăлава хутшăнма тивĕçлисем пĕтĕмпе 22 пин те 605 çын. Вĕсенчен ытларахăшĕ сасăлава активлă хутшăнасса, хăйсен гражданла тивĕçне пурнăçласса шанас килет. Мĕншĕн тесен çĕршывăн Тĕп саккунне кĕртме сĕнекен улшăнусем пирĕнтен кашнинех пырса тивеççĕ. Сасăлав кунĕнче участока пыма май пулманнисене вара маларах сасăлама чĕнсе каланă пулăттăм.

В. ШАПОШНИКОВ калаçнă.

Тӳрĕ ыйту – тӳрĕ хурав

«Почтальон ĕçлеме тытăнсан пăтăрмахсем пулмĕç»

«Тӳрĕ ыйту – тӳрĕ хурав» телефонĕпе редакцие **Муркаш ялĕнчи Гагарин урамĕнче пурăнакан хĕрарăм** шăнкăравласа тухрĕ. Килĕнче икĕ хĕрарăм-пенсионерка анчах пурăнни пирки калать. Пурăнканă, хăйне май йĕркеллех темелле. Пăтăрмахсем хăйсем патĕнче почтальон ĕçлеме пăрахсан тытăннă. «Пирĕн почтальон ĕçлеме пăрахрĕ та халĕ эпир хамăр çырăнса илекен район хаçатне те, çитменнине тата пенси те вăхăтра илсе тăма пултараймастпăр. Май килнипе вăхăтран вăхăта кăна валеçкелеççĕ. Татах хăçанччен чăтса пурăнмалла-ши кун пек йĕркесĕрлĕхе?» – ыйтать вăл. Кунсăр пуçне Муркашри Колхозная, Советская, Пионерская урамсенчи пенсионерсем те çакăн пек лару-тăрура пурăнни пирки калать. Мĕншĕн тесен хăйсен пенсине почта урлă илсе тăракансем асăннă урамсенче пурăнакансем хушшинче те сахалах мар иккен.

Вулакан ыйтăвне **Муркаш почтамчĕн участок пуçлăхĕпе Олимпиада ВЕСЕЛОВĂПА** çыхăнса уçăмлатма май килчĕ. Олимпиада Михайловна каласа панă тăрăх, Муркаш участокĕпе почтальон пулманни – вăхăтлăх япала. Ку тапхăрта çынсене хаçат-журналпа вăхăтра тивĕçтерессипе хăш-пĕр çитменлĕхсем пулма пултарнă. Почтальон пулман пирки вулакансене периодика изданийĕсене килĕсене çитерсе пама почта ĕçченĕсене явăçтараççĕ. Пур издание те ĕç кунĕсенче вулакансем патне çав кунах çитерсе пама тăрăшнă. Шăматкун пичетленсе тухаканнисене кăна тунтикун леçсе пани пулнă.

Татах тепĕр хут каласа хăварасшăн. Ку вăл – вăхăтлăх япала. Çавăнпа та Олимпиада Михайловна маларах асăннă урамсенче пурăнакансене ытлашши пăлханма сĕнмерĕ. Почтальон ĕçлеме пуçăнсанах кун пек пăтăрмах таврашĕ пулмĕ тесе шантарчĕ.

Пенси почтальон урлă илсе тăракансем пирки те ыйтса тĕпчерĕм. Пенси вĕсем патне кая юлса çитерни пулма кирлĕ марри пирки каларĕ. Шăматкун илмеллине тунтикун пани кăна пулма пултарнă. Апла пулсан ятарлă почтальон ĕçлеме тытăнсан çынсен пенси вăхăтра илессипе те урăх ыйту пулмĕ тесе шанас килет.

«Тӳрĕ ыйту – тӳрĕ хурав» телефонĕсем: 62-2-82, 8-927-857-42-06.

В. ШАПОШНИКОВ хатĕрленĕ.

Культура

Вăй-хăвачĕпе чун ăшши – пурин валли те

Татьяна Зиновьевна Степанова çак кунсенче хăйĕн сумлă юбилейне паллă турĕ. Йӳçкасси ял тăрăхне кĕрекен Çĕмĕрткасси ялĕнче çуралса ӳснĕскере, чылай çын паян ăна хастар культура ĕçченĕ пулнипе пĕлет.

Татьяна Зиновьевна хăйĕн ĕç биографине çак сферăра 1986 çулта çырма пуçланă: çав çул Муркаш район библиотекин вулав залĕнче ĕçлеме тытăннă. Тепĕр çулхинех ăна Сосновкăри ял библиотекине ертсе пыма шаннă. Çавăнтанпах вăл унта ырми-канми тăрăшать, Н. Никольский музейĕн ĕçне те йĕркелесе пырать. «Ĕçе яланах тĕплĕ пурнăçлама тăрăшатăп, ячĕшĕн туни ман чуна тивĕçтермест», – тет вăл. Çавăнпах ĕнтĕ библиотекăра та, музейра та тирпейлĕхе мала хурса ĕçлет, çынсемпе те яланах вашават. Татьяна Зиновьевна – Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, республикăри Хисеплĕ таврапĕлӳçĕ. Унăн ку таранченхи ĕçне пысăка хурса хакланă: тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн ведомство наградисемпе те, Чăваш наци конгресĕн Хисеп грамотипе те чысланă.

Татьяна Зиновьевнăна, лара-тăра пĕлменскере, ывăннине туйман çын тесе калама та пулать. Вăй-хăватне, чун ăшшине вăл пурин валли те çитерет: ĕçĕнче – музейпа библиотекăна аталантарса пыма, çемьере – мăшăрне, виçĕ ывăлĕпе кинĕсене тата мăнукĕсене пулăшса тăма.

Н. НИКОЛАЕВА.

Ял хуçалăхĕ

Кашни хăйĕн яваплăхне туять

Пус çумне пус хушассишĕн тăрăшакан ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсем кунпа мар, сехетпе çурхи уй-хир ĕçĕсене планпа пăхнă вăхăтра ытлă-çитлĕ пурнăçлассишĕн тăрăшрĕç. Çурхи кун çулталăк тăрантарнине шута илсе, вĕсен пахалăх ыйтăвĕ те иккĕмĕш вырăна юлмарĕ.

Ял хуçалăхĕнче пĕр ĕç теприпе çыхăнса пынине эсир паянхи сăн ӳкерчĕкре куракан ĕçченсем те лайăх ăнланаççĕ. Ака-суха ĕçĕсене вăхăтра пурнăçланăскерсем, паян малашлăха пăхса пусу уйĕсене тирпейлĕ пăхса тăрассипе тăрăшаççĕ.

– Пĕр çемьери пек вăй хурса çурхи ака-суха планне туллин пурнăçлассишĕн тăрăшрăмăр. Çапла вара 1000 гектара яхăн тырă-пулă акса хăвартăмăр. Технологие пăхăнса ĕçленĕрен паян пысăк тухăça шанса малалла тăрăшатпăр, – терĕ ака агрегатне хиртен илсе тухнă май Суворов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕнчи акаçăсен ушкăнĕ. Вĕсем **(сăн ӳкерчĕкре** сулахайран сылтăмалла): Сергей Григорьев акаçă, Олег Никитин механизатор тата Николай Важоров акаçă.

Асăннă хуçалăх ака-суха вĕçленнипе лăпланса ларmасть. Паян çĕр хатĕрлекен агрегатсем кĕр аки валли хăварнă çĕр участокĕсене çум айне пуласран пăхса тăрассипе тăрăшаççĕ. Кунпа пĕрлех хуçалăх районта малтисен йышĕнче «симĕç ĕç çи» пуçларĕ. Хуçалăх ертӳçи Алексей Воробьев каланă тăрăх, паян уяр кунсен кашни минучĕпе туллин усă курса выльăх апачĕ хатĕрлес ĕç пырать. «Выльăх-чĕрлĕхрен продукци ытлă-çитлĕ илес тесен уттине те, сенажне те кĕске вăхăтра тата пахалăхлă янтăласа хăварmалла. Ытлă-çитлĕ апат çеç выльăх-чĕрлĕх патĕнче ĕçленсен ĕçлес кăмăлне çĕклĕ», – хирелле васканă май каласать кооператив ертӳçи.

Анаткассинчен тухнă хыççăн Чкалов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативне çитрĕмĕр. Кунта та кашни механизатор хăйĕн яваплăхне туйса ыранхи куна пăхса ĕçлени курăнчĕ. Вăхăтпа тухăçлă та усăллă усă курма тăрăшнăскерсем, шутлă кунсенче 700 гектар çинче çурхи культурăсем акса хăварнă. «Умри ĕмĕтсем пысăк. Çу кунĕсен кашни сехечĕпе усă курса пусу уйĕсенчи çумпа технологипе килĕшӳллĕн кĕрешес тетпĕр. Ку ĕçе хутшăнманнисем паян-ыран «симĕс ĕç çине» тухĕç. Алă усмасăр ĕçлеме кашнин хăйĕн тĕллевĕ пур. Пĕрле ĕçлени кĕр çитсен курăнĕ», – терĕ Т -150 тракторпа çĕр кăпкалатассипе тăрăшакан Ростислав Алексеев **(иккĕмĕш сăн ӳкерчĕкре)**.

Паян асăннă хуçалăхсенче мал туртăмлă ĕçлеме условисем пулни куç умĕнче. Техника хатĕрĕ те, ĕç вăйĕ те çитсе пыни çур акине кĕске вăхăтра ирттерме май панă. Ырă тĕллевсем «симĕç ĕç çине» те тухăçлă ирттерессе шантараççĕ. Ку – хамăршăн. Кашни ĕçе вăхăтра пурнăçласан çеç хуçалăх экономики те тĕрек пулĕ, ĕçлекенсен пурнăçĕ те лайăхланĕ. Çавăн чухне çеç çĕнĕ плансем, ĕмĕтсем, тĕллевсем çуралĕç тата пурнăçланĕç.

Çурхи ака-суха вĕçленни çĕр ĕченĕшĕн ял хуçалăхĕнчи чи ответлă ĕçсем пуçланнипе тӳр килет. Умра – акнă-лартнă культурăсене таса-сывă пăхса çитĕнтересси, «симĕс ĕç çине» вăхăтра пурнăçласси, кĕрхи ĕçсене хатĕрленесси т. ыт. те. Мĕн акни-лартнине тĕрĕс-тĕкел пăхса ӳстерсе çухатусемсĕр кĕлете пухса кĕртсен çеç эпир хамăр ума лартнă тĕллевсене пурнăçларăмăр теме пултарăпăр.

А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕсем.

Сăмах – специалиста

Сиен кӳни, пулăхлăх чакни палăрнă

«Хамăр çĕр хуйхăра та савăк», – тенĕ ваттисем. Хамăра тăрантаракан çĕре хисепрен кăларма кам хăйтăр темелле. Шел те, пур çав кунашкал тĕслĕхсем пирĕн тăрăхра.

Пулăхлăха упраса хăварасси – ĕнер-паян сиксе тухнă ыйту мар. Республикăра çĕре вырăн-вырăнпа юрăхсăрлатнине çултан-çул тупса палăртаççĕ Россельхознадзорăн специалисчĕсем.

Пай пуçлăхĕн çумĕ Раиса Петрова каланă тăрăх, пĕлтĕр Чăваш Енри ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ 9021 гектар çĕр тĕлĕшпе 472 тĕрĕслевпе сăнав ĕçĕсем ирттернĕ. 1458 гектар çинче йĕркене пăсни палăрнă (пĕтĕмпе – 99 тĕслĕх): Улатăр, Элĕк, Патăрьел, Вăрнар, Куславкка, Муркаш, Çĕрпӳ, Канаш, Шупашкар, Вăрмар районĕсенче.

Çӳп-çап куписенчен, тислĕк таврашĕнчен сахал мар шар курать çĕр. Нумай чухне вара чылай тапхăр ашкăрса ларнă çум курăк çĕре япăхлатса пырать. Киревсĕр тĕслĕхсем пирки çынсем хăйсем те çырса пĕлтереççĕ. Кӳршĕре типсе кайнă çум курăкран пушар тухас хăрушлăх та пуррине кашниех ăнланать-ха та.

Тĕрĕслев ĕçĕсем ирттернĕ май пулăхлă тăпрана сиен кӳнин шайне палăртма çĕре ятарласа тĕпчеттереççĕ.

Сăмах май, пĕлтĕр Çĕрпӳ, Элĕк, Вăрнар, Улатăр, Шупашкар, Муркаш, Патăрьел, Хĕрлĕ Чутай, Елчĕк, Комсомольски, Куславкка районĕсенчи çĕрсенчен илнĕ 398 пробăна Россельхознадзорăн Самарăри тата Чулхулари референт центрĕсенче тĕпченĕ.

Çав шутран 46-шĕ Муркаш, Патăрьел, Çĕрпӳ районĕсенче çĕре сиен кӳнине çирĕплетет. 131 гектар çинче нитрат, йывăр металсен тăварĕсен тата бенз(а)пирен шайĕ нормăран пысăкрах пулнă.

Агрохими тĕпчевĕсем пирки калас пулсан та лайăхах мар пулăм пирки каламасăр май килмест: 71 проба пулăхлăх чакнине çирĕплетет. 631 гектар çĕр пирки кунта сăмахăм.

Тĕрĕслевпе сăнав ĕçĕсен витĕмĕ пуррине те калас килет. Асăрхаттарусем хыççăн 192 гектар çинчи йĕркесĕрлĕхе пĕтернĕ, 565 гектара вара пусă çаврăнăшне кĕртнĕ. Шупашкар, Элĕк, Патăрьел, Вăрнар, Муркаш, Çĕрпӳ, Йĕпреç, Вăрмар районĕсен çыннисем пушă выртнă çĕрĕсемпе тĕллевлĕн усă курма тытăннă. Çĕр лаптăкĕсен пахалăхне тĕпчес ĕç кăçал та малалла тăсăлĕ.

Надежда ВАСИЛЬЕВА,
Россельхознадзорăн Чăваш Республикинчи тата Чĕмпĕр облаçĕнчи управленийĕн ĕçченĕ.

Редакци почтинчен

Палăк тата ытти çинчен

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи истории шаларах та шаларах юлса пынă май, ун çине паянхи ăру тĕрлĕрен пăхнине асăрхама пулать.

Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи Анатри Панклири Культура çурчĕ умĕнче хаяр вăрçăра пуç хунă ентешсене халалласа лартнă палăк пур. Ун тавра вуншар çул каялла лартнă çăка йывăççисем çывăх вăхăтра чечек çурса пыл хурчĕсене астараймĕç, тавралăха илем кӳреймĕç. Аслă Çĕнтерӳ 75 çул тултарнă вăхăтра аслăрах ăрурисем вăрçă паттăрĕсене халалласа лартнă улмуççисем çинчен вĕсен кĕçĕн мăнукĕсем те кĕр çитсен пан улми татса çиеймĕç.

Çакнашкал лару-тăру патне ĕç-хĕл майĕпен çитсе пычĕ. Палăк лаптăкне йывăç решетке карта тытса çавăрнăччĕ. Кăçал ăна юсама çук тесе тăрăхăн-тăрăхăн сӳтрĕç те шкул участокĕнчи картана юсарĕç, Йӳçкасси ял урамне илемлетме усă курчĕç. Çав вырăнсене юсама çирĕп материал пулчĕ Анатри Панклири палăк тавра тытнă хӳме.

Самана улшăнсах пырать. Малтан ялти кантур пулнă кирпĕч çурта та хулара пурăнакан, ял хуçалăхĕнче ĕçлемен В. Алексеева пачĕç. Нумаях та вăхăт иртмерĕ, ялти Культура керменне авариллĕ лару-тăрура тесе (ял çыннисен пĕчĕк йышĕпе пуху ирттерсе) ăна та В. Алексеев харпăрлăхне куçарчĕç. Культура çуртне юсама майĕ çук пулсан, ял çыннисем валли кирпĕч кантуртан та клуб тума пулатчĕ пулĕ. Анчах...

Инçех мар ял хуçалăх столовăйĕн çурчĕ пурччĕ. Хуçалăх ĕçченĕсем унпа хăй вăхăтĕнче питĕ кăмăллăччĕ. Вăхăт иртсен унта сыр тăвакан цех хута ярсан, лару-тăру тĕпренех улшăнчĕ. Çуллахи вăхăтра ун çывăхĕнче сыр производствин каяшĕпе сывлама та майĕ çук. Юнашарти автобус чарăнăвĕ хыçĕнче таса мар шыв кӳлленчĕкĕ тăрать. Çав вăхăтрах сыр тăвакан çуртăн тепĕр енче медицина çурчĕ вырнаçнă, хирĕçех – автосервис. Шăрăх çанталăкра кунта шăна-пăван явăнать кăна. Автосервис енчен вара таврана бензин-топливо шăрши сарăлать. Паян ялта кашни çынна кирлĕ медицина çуртне ан хупчăр тесе хăраса тăратăп кăна.

Палăк тӳремĕнчи ача-пăча лаптăкĕ çывăхĕнче халĕ пĕчĕк кӳлĕ те пур. Унта çуркунне шыв тулать тата çумăр çусан икĕ енпе юхса анать. Пĕри сыр базинчен вăй илет, тепри сыр базинченех автосервис канализацийĕпе тухса вăй илет. Çапла вара ача-пăчашăн «питĕ усăллă» çав кӳлĕ, тăван тавралăхшăн та.

С. КИРИЛЛОВ,
интернационалист-салтак.

Сергей Иванович çырăвĕпе эпир **Йӳçкасси ял тăрăхĕн пуçлăхне Анатолий КУЗЬМИНА** паллаштартăмăр. Анатолий Николаевич пирĕн вулавçă хускатнă ыйтусене конкретлă хурав пачĕ:

– Ял тăрăхĕн пурнăçĕпе, ялсен аталанăвĕпе кăсăкланакан çынсем пурри эпир пĕччен пулманнине çирĕплетет. Апла пулсан ялсен малашлăхĕ пур тесе шутлатăп. Паллах, пурте тивĕçлĕ шайра пултăр тесен, пĕрле пухăнса пурнăçламалли ĕçсем те сахал мар.

Интернационалист-салтакăн çырăвĕ çине хуравласа тата вăл хускатнă уйрăм ыйтусем тĕлĕшпе çапла пĕлтеретĕп. Пирĕн ял тăрăхĕнчи Анатри Панкли ялĕнчи Культура çурчĕ умĕнче Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче пуç хунă ентешсене халалласа лартнă палăк чăнах та пур. Çак илемлĕ вырăн малашне те хăйĕн пĕлтерĕшне ан çухаттăр тесе ăна хăт кĕртме шутларăмăр. Çак тĕллевпе кунта ӳссе кайнă тата ватăлнă çăкасене йĕркене пăхăнса, вĕсем малашне те тавралăха илем кӳччĕр тесе тăватă метр çӳллĕшĕнчен касрăмăр. Çитес çулсенче вĕсем ешĕл çĕлĕк тăхăнĕç, тавралăх илемне ӳстерĕç.

Улмуççисем тенĕрен. Нумай çул маларах лартнăскерсем ватăлнăччĕ ĕнтĕ. Вĕсем хушшинче хăрнисем тата хăрăк туратлисем те пурччĕ. Аслă Çĕнтерӳ 75 çул тултарнине уявлама хатĕрленнĕ май çак илемсĕрлĕхпе килĕшсе лараймарăмăр.

Палăк таврашĕнчи карта пирки çапла хуравлатăп. Вăхăтра кунта тирпейлĕ карта тытнăччĕ. Çулсем иртнĕ май вăл тата чикмексем çĕрĕшни палăка илем кӳми пулчĕ. Çитменнине, çывăхра ачасен вăйă лаптăкне уçнă май, вăл ачасемшĕн хăрушлăх кăларса тăратнине шута илсе, ăна сӳтме йышăнтăмăр.

Çырура асăннă В. Алексеев хăйĕн пуçарулăхĕпе кăçал палăка юсарĕ, тавралăха тирпейлерĕ. Вăл малашне те кунта тирпейлĕхпе хăтлăх тытса тăма килĕшрĕ.

Культура çурчĕ пирки калас пулсан, ăна В. Алексеев аукцион витĕр тухса хăйĕн çине регистрацилерĕ. Кунпа пĕрлех ун таврашĕнчи çĕр участокне те халĕ вăл пăхса тăрать.

Столовăй – производство объекчĕ. Кунта уçăлнă сыр цехĕ хăшпĕр çынсемшĕн ĕç вырăнĕ пулса тăчĕ. Цех хуçисем йĕркене пăхăннине Роспотребнадзор инспекторĕсем пĕрре çеç мар тĕрĕслерĕç, тивĕçлĕ йышăнусем кăларчĕç. Ял çыннисем кунти ĕçсемпе килĕшмесен, вĕсем татах килсе тĕрĕслеме пултараççĕ.

Пĕлни пăсмасть

Йывăр мар апат

Хăяр тутлă пахча çимĕç пулнипе палăрса тăрать. Вăл çыннăн вар-хырăмĕшĕн йывăр апат мар. Хăярта 95 процент шыв.

Шывран ытла хăярăн усăллăхĕ мĕнре-ха?

Хăяр выçăлăха хăвăрт ирттерет. Çапла вара куç умĕнчех ӳт-пӳ йывăрашне пĕчĕклетмелли çул уçăлать: хырăм тутă пек туйăнать, анчах калорисем сахал.

Полици хроникинчен 12+

Аслипе каласа ăс кирлĕ

Çапла каланă ваттисен сăмахĕнче. Москакасси ял тăрăхĕнче пурăнакан пĕр яш вара ун пек шутламан курăнать. Тен килти аслисем ăна çапла шутлама вĕрентсе çитереймен. Унсăрăн вăл хăйĕнчен чылай аслăрах арçын çине алă çĕкленĕ пулмĕччĕ.

Аслă çулти арçынна больницăна леçмелле пуличченех хĕненĕ вăл. Çапла вара алли çӳлте, ăсĕ вăйĕнчен кайра пулнăран суд тенкелĕ çине ларма тивет каччăн. Çав тенкел çинче вăл унччен те темиçе хутченех ларса курнă-ха. Ун тĕлĕшпе палăртнă административлă надзор срокĕ те вĕçленмен иккен. Апла айăплав çирĕпрех пуласси те куçкĕрет.

Çулĕ мар, хăйсем «япăх» пулнă

Турай ял тăрăхĕнче пурăнакан «чăнкă» каччăсем каç енне çулсем тĕрĕслеме тухнă пулас. Кашни – хăйĕн машинипе. Шăтăк-путăкĕсем куçа ытлашши ан курăнччăр тесе-ши, вĕсем руль умне хĕрĕнкĕ ларнă. Каччăсен çулĕ вара капла та такăр пулман, Çулав ялĕ сывăхĕнче чарăнма тивнĕ, анчах çул япăххине пула мар. Ӳсĕр водительсене çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекторĕсем чарнă.

Кăçалхи 5 уйăхра кун пек ӳсĕр водительсене районти инспекторсем пурĕ 40 хут тытса чарнă, вĕсенчен 9-шне – çак йĕркене тепĕр хут пăснăшăн. Ӳсĕр водительсене пула 2 инкек тухнă, вĕсенче 3 çын суранланнă.

Ӳсĕрле машинăпа çула тухакансене халĕ 30 пин тенкĕ штраф кĕтет (тепĕр хут пулсан – 50 пин тенкĕ) тата вăхăтлăх транспорт хатĕрĕпе çӳреме чарĕç.

«Банк сотрудникĕ» текен укçа вăрланă

«Сирĕн пата банк сотрудникĕ шăнкăравлать. Сирĕн счет çинчен укçа вăрласшăннине палăртнă...», – пĕлтернĕ Мускав регионĕнчи телефон номерĕпе шăнкăравлакан çын. Оринин ял тăрăхĕнчи арçын вара ăна ĕненнĕ. Телефонпа шăнкăравлакан ултавçă унпа калаçнă май банк карттин реквизичĕсене пĕлсе укçа çаратнă – 4500 ытла тенкĕ.

Çынсемпе йĕркеленĕ кашни тĕл пулура тенĕ пекех полици сотрудникĕсем ултавçăсенчен асăрханмалли пирки калаççĕ. Полицейскисем банк карттин реквизичĕсене никама та пĕлтермелле мар тенине шăп та лăп пĕлтермелле мар тесе ăнланмалла, урăхла мар.

Пичете РФ Шалти ĕçсен министерствин Муркаш районĕнчи пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.

Объявления

НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ от 150 руб!!! Тел. 8-909-300-33-66. 40-97.

Продаю швеллер 12 м. Тел. 8-987-678-14-85.

* * *

Ăратлă, сĕтлĕ ĕнен уйăх çурăри тына пăрушне усрама сутатпăр. Тел. 8-961-346-11-66, Елена.

* * *

Утерянный аттестат о среднем общем образовании А №4657102, выданный 22.06.1999г. Большесундырской средней школой Моргаушского района Чувашской Республики на имя Афанасьевой Веры Юрьевны, считать недействительным.

* * *

Сумалли качака тата 2 уйăхран иртнĕ качака путеккисемпе такисене сутатăп. Амăшĕсем тĕрлĕрен. Тел. 8-937-390-68-71.

* * *

Продаю дрова. Тел. 8-996-850-86-87.

* * *

СХПК им. Е. Андреева реализует ячмень и ЭКД. Продажа зерна в связи с распрост. коронавирусной инфекции осуществляется только с доставкой 10 руб/кг. Тел. 8-937-012-58-80, 8-937-012-51-31, 8-937-012-13-34, 8-937-012-73-75. 6-10.

ТАВ ТĂВАТПĂР

Хамăрăн чи сывăх çыннăмăра – юратнă мăшăра, аттене, пиччене – Муркашра пурăннă Владимир Николаевич Павлова юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, çак нимĕнпе виçеймми йывăр хуйха пирĕнпе пĕрле пайланăшăн, чăтма çук йывăр вăхăтра пирĕнпе пĕрле пулнăшăн «Моргаушское» пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятин, Муркаш район администрацийĕн коллективĕсене, Чăваш Республикинчи çынсен пурнăçне тивĕçтерекен службăн профсоюз комитетне, Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕн коллективне, Муркаш райповĕн 1 номерлĕ столовăйпа пиццери ĕçченĕсене, Муркашри вăтам шкулти 11б класа, тăвансене, тус-юлташсене, кӳршĕсене тата çак йывăр хуйха пирĕнпе пайланă мĕнпур çынна чун-чĕререн тав тăватпăр.

Муркашри Павловсен çемйи.

Ильинкăри вăтам шкул коллективĕ кунта чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен Л.В. Семенован

АШШĔ

вилсе кайнă пирки унăн тăванĕсемпе тата çывăх çыннисемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Хаçатăн çитес номерĕ июнĕн 11-мĕшĕнче тухать.

ПРОДАЕМ: ПИЛОМАТЕРИАЛЫ, ВАГОНКУ, ШПУНТ, БЛОКХАУС. Тел. 8-906-130-30-00. 7-10.

ПРОДАЮ: ПЕСОК, ОПГС (ГРАВМАССА), ПГС, ЩЕБЕНЬ, КЕРАМЗИТ и другое. ДОСТАВКА из с. МОРГАУШИ от 1 до 15 тонн. НЕДОРОГО. Тел. 8-927-862-42-44. 2-10.

Кивелнĕ ЭЛЕКТРОПРОВОДКА – пушар хăрушлăхĕ! Кил-çуртри электропроводкăна, счетчика улăштарат-пăр. Тел. 8-937-015-35-40. 10-10.

ОКНА, ДВЕРИ. Гарантия. Качество. НЕДОРОГО. Скидки. Тел. 8-987-579-25-33. 2-10.

КУПЛЮ / ТУЯНАТĂП

КУПЛЮ КОРОВ, БЫЧКОВ, ТЕЛОК, ЛОШАДЕЙ, ОВЕЦ. ДОРОГО. Старых, молодых в любом состоянии и вынужденный забой. Тел. 8-961-344-03-82. Рома. 2-20.

* * *

КУПЛЮ БЫЧКОВ от 10 дней до 600 кг. КОРОВ. ТЕЛОК. ВЫНУЖДЕННЫЙ ЗАБОЙ. Тел. 8-937-952-33-80. 5-5.

* * *

КУПЛЮ КОРОВ, БЫЧКОВ от месяца на откорм. ДОРОГО. Тел. 8-937-391-23-33. 5-5.

* * *

КУПЛЮ бычков от месяца до 550 кг, коров, телок. Вынужденный забой в любом состоянии. Тел. 8-937-951-19-03. 9-31.

* * *

Закупаю дорого! КОРОВ, БЫКОВ, ТЕЛОК НА МЯСО. Тел. 8-961-345-77-89. 9-31.

* * *

ТУЯНАТПĂР: ĕнесем, вăкăрсем, тынасем, лашасем, усрамалли пĕчĕк вăкăрсем, чирлĕ, кӳпĕнсе кайнă выльăхсем. Хаклă хакпа. Игорь. Тел. 8-937-958-29-89. 3-10.

РАБОТА / ĔÇ

Организации в с. Моргауши требуется охранник без в/п и ограничений по здоровью, график работы смена – 15 часов через двое суток, в выходные суточное дежурство. З/п 7000 – 9000 руб. Тел. 8-919-660-34-35, Алексей. 2-2.

В Моргаушское райпо требуется МАСТЕР по ремонту холодильного оборудования. Тел. 62-2-88, 8-937-379-18-08. 3-4.

СРОЧНЫЙ НАБОР НА ВАХТУ с питанием и проживанием. З/П 79 200 руб. Корпоративный транспорт. Тел. 8 800 100 76 41 (звонок бесплатный)

Объявления

Продаем пиломатериалы обрезные, кровельные 25 мм, половые 50 мм, брус любого размера; шпунтованные доски, вагонку; цемент, кирпич. Доставка. Тел. 8-903-346-40-58, 8-927-996-16-52. 7-20.

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Срубы на заказ. Цена договорная. Доставка по району бесплатно. Тел. 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 9-10.

ПРОДАЮ ГРАВМАССУ, ПЕСОК, ЩЕБЕНЬ. Доставка. Недорого. Тел. 8-905-199-69-33. 4-10.

* * *

ПЕСОК, ГРАВМАССА, ЩЕБЕНЬ (известковый, гранитный). ТОРФ. ДОСТАВКА. НЕДОРОГО. Тел. 8-987-667-42-51. 2-10.

* * *

Все виды строительных работ от подрядчика: дома, бани, гаражи, фундамент, забор, кирпичная кладка, кровля любой сложности. Проект, смета – в подарок. Работаем: с материнским капиталом, сельской ипотекой. Рассрочка, кредит. Продаем бетон, профнастил, цемент и т.д. Тел. 8-937-397-08-71, 8-937-940-80-55. 10-10.

* * *

Песок, щебень, гравмасса, бой кирпича, асфальтная крошка. Доставка. Тел. 8-927-857-21-33, 8-937-393-37-07. 18-64.

* * *

ВСЕ ВИДЫ СТРОИТЕЛЬНЫХ РАБОТ. Дома и бани под ключ, кровля любой сложности. Внутренняя и внешняя отделка, отделка домов сайдингом. Смета бесплатно. Рассрочка. Кредит. Тел. 8-927-992-32-42, 8-987-670-56-78. 4-10.

* * *

Продаю навоз, песок, гравмассу с доставкой. Недорого. Тел. 8-905-027-37-65. Леонид. 10-12.

* * *

Продаю навоз, чернозем, торф, песок, гравмассу, грунт, гравий, щебень, бой кирпича. Доставка. Недорого. Тел. 8-905-198-63-88. Димитрий. 10-25.

* * *

Пӳрт, сарай тата ытти çурт-йĕр çивиттине туса паратпăр. Çавăн пекех шалти мĕнпур ĕçе пурнăçлатпăр. Анатолий. Тел. 8-927-866-66-63. 9-10.

* * *

ПРОДАЮ: ГРАВМАССУ, БОЙ КИРПИЧА, ПЕСОК, ЩЕБЕНЬ. Доставка. Недорого. Тел. 8-905-028-22-25. 8-10.

* * *

Песок, гравмасса (ПГС), услуги КамАЗ-самосвала, услуги манипулятора. Работаем без выходных, доставка в любое удобное для Вас время. Тел. 8-927-993-17-72. 6-10.

* * *

Продаю: песок, щебень, гравмассу, бой кирпича. Доставка. Тел. 8-919-650-96-68. 7-12.

* * *

ГРАВМАССА, ПЕСОК. Доставка. Тел. 8-906-380-12-36. 5-8.

* * *

ЗАБОРЫ ИЗ СЕТКИ-РАБИЦЫ, СВАРНОЙ СЕТКИ, ПРОФНАСТИЛА, ЕВРОШТАКЕТНИКА. ВОРОТА, КАЛИТКИ, НАВЕСЫ, КОЗЫРЬКИ. БЛАГОУСТРОЙСТВО ЗАБРОШЕННЫХ УЧАСТКОВ. ПЕНСИОНЕРАМ – СКИДКИ. Тел. 8-937-942-87-85. 2-20.

* * *

Продаю пшеницу. Возможна доставка. Тел. 8-909-304-08-81. 7-10.

* * *

Продаю кур, гусят, утят, мулардов, бройлеров, индюков. Доставка. Тел. 8-909-300-08-18. 10-10.

* * *

Бройлер, хур, кăвакал, мулард, кăркка чĕпписене сутатпăр. Нумай илекенсене леççех паратпăр. Килтен те илме пулать. Тел. 8-906-130-82-51, 8-937-395-16-03. Оля. 6-10.

* * *

Анатри Тăмлай ялĕнче пурăнмалли йывăç çурт хуралтăсемпе пĕрле сутатпăр. Çĕрĕ 37 сот. Тел. 8-927-192-46-42, 8-987-698-38-42. 3-3.

* * *

Продаю чернозем, торф, асфальтную крошку, щебень, гравмассу, песок, бой кирпича и бетона, вывоз строительного мусора. Тел. 8-917-676-93-79, 8-961-347-25-47. 2-10.

* * *

Услуги мини-экскаватора, манипулятора, эвакуатора. Тел. 8-927-847-85-59, 8-962-599-04-70, с. Моргауши. 2-3.

Прогноз погоды По данным сайта rp5.ru

	Вторник				Среда				Четверг				Пятница			
Местное время	03	09	15	21	03	09	15	21	03	09	15	21	03	09	15	21
Облачность %																
Явления погоды																
Температура	+12	+19	+21	+17	+13	+20	+23	+17	+15	+22	+24	+18	+15	+22	+25	+20
Ощущается																
Давление	751	752	752	751	751	751	750	749	749	749	749	748	748	748	747	746
Ветер	2	3	4	3	2	1	2	2	3	5	4	3	2	3	4	3

Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви.
ЧР Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин "Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ" Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.

Редакципе издатель адресĕ: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
Телефонсем: тĕп редактор – 62-1-36, бухгалтери – 62-1-35,
пайсем: общество пурнăç пайĕ – 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕсем – 62-1-38.
Факс: 62-1-36. E-mail: smi24@cap.ru, smi24-1@cap.ru, redaction_morgau@mail.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрацленĕ.

Калăпăшĕ 1 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

Р– реклама материалĕ.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: П2851.
Хаçат юнкунсерен тата шăматкунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ А.И. Волкова.
Пичете панă 8.06.2020 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 16 сех. 20 мин., чăннипе – 16 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4548.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Ç.нтер ялав.»: отпечатан в типографии АО «ИПК «Чувашия»% 428019 г? Чебоксары: пр? И? Яковлева:13? Качество печати соответствует оттискам: предоставленным редакцией?